Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

8 (7648) № ✻ Шăмат кун, 2009 çулхи январĕн (кăрлач) 31-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Лару

## Депутатсем канашларĕç

Кĕçнерни кун депутатсен районти Пухăвĕн 31 ларăвĕ ĕçлерĕ.
Лару çак кун йĕркине çирĕплетрĕ:
1. Район Уставне улшăнусем кĕртесси çинчен.
2. Депутатсен районти Пухăвĕн 2008 çулхи декабрĕн 5-мĕшĕнчи С-30-2 № «Районăн 2009 çулхи бюджечĕ çинчен» йышăнăвне улшăнусемпе хушăмсем кĕртесси çинчен.
3. «Муркаш районĕн хыпарçи» периодикăлла пичет изданийĕ çинчен.
4. Политика репрессийĕсене пула инкек тӳснисене ырă ят тавăрса паракан комисси йышăнăвĕ çинчен.
5. Депутатсен районти Пухăвĕн уйрăм йышăнăвĕсем вăйне çухатни çинчен.
6. Районти муниципаллă пурлăха 2009 çулта приватизацилемелли прогноз планĕ çинчен.
7. Наградăсем илме тăратасси çинчен.
Ларăва депутатсен районти Пухăвĕн ертӳçи И.В. Николаев ертсе пычĕ. Депутатсем кун йĕркине кĕртнĕ ыйтусемпе йышăнусем турĕç. Вĕсемпе малашнехи номерсенче паллаштаратпăр.
Лару ĕçне район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов хутшăнчĕ, сăмах каларĕ.
Лару хыççăн районăн 2008 çулхи социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн итогĕсене сӳтсе яврĕç. Тĕплĕнрех - çитес номерте.

ЧР Президенчĕн стипендиачĕсем

## Вĕренӳре хастар



*Елена Алексеева Оринииnти вăтам шкулта тăххăрмĕш класра вĕренет. Хăйĕн çитĕнĕвĕсемпе вара вăл кăçал ЧР Президенчĕн стипендине тивĕçрĕ. Пĕлтĕр республикăра иртнĕ шкул ачисен наукăпа практика конференцийĕнче те, И. Яковлев ĕçĕ-хĕлĕне сыхăннă дистанци мелĕпе иртнĕ олимпиадăра та Елена иккĕмĕш вырăнсем çĕнсе илнĕ. Раççей шайĕнчи «Чĕвĕлти чĕкеç» конкурсра 1-мĕш вырăна тухнă. 2008-2009 вĕренӳ çулĕнче те республика шайĕнчи олимпиадăсене хутшăнса вăл культурологипе 1-мĕш, право предмечĕпе 2-мĕш пулнă. Пĕр сăмахпа каласан, Елена пирĕн республикăри чи асăннă вĕренекенсенчен пĕри пулса тăрать. Унпа пĕрлех пултаруллă хĕр ача спорта та кăмăллать, обествăлла ĕçсене те активлă хутшăнать.*

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕ**

## Хула округĕсемпе муниципалитет районĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ĕç-хĕлĕн эффективлăхне хакласси çинчен

Чăваш Республикинчи муниципалитет районĕсен тата хула округĕсен социаллă пурнăçпа экономикине малалла аталантарассине вăйлатас, Раççей Федерацийĕн Президенчĕн 2008 çулхи ака уйăхĕн 28-мĕшĕнче «Хула округĕсемпе муниципалитет районĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен эффективлăхне хакласси çинчен» йышăннă 67-мĕш Указне пурнăçа кĕртес тĕллевпе çапла йышăнатăп:
1. Çирĕплетес:
хула округĕсемпе муниципалитет районĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ĕç-хĕлĕнче чи лайăх кăтартусем тума пулăшас тата çитĕнӳсемшĕн хавхалантарас тĕллевпе муниципалитет пĕрлĕхĕсене Чăваш Республикин республика бюджетĕнчен бюджет укçи-тенкин шучĕпе грантсем парас йĕркене (1-мĕш хушăм);
хула округĕсемпе муниципалитет районĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ĕç-хĕлĕнче палăртнă сферăри ĕç-хĕлне халăх мĕнле хакланине пĕлме социологи ыйтăмĕсем ирттермелли йĕркене (2-мĕш хушăм);
хула округĕсемпе муниципалитет районĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ĕç-хĕлĕн эффективлăхне хакламалли хушма кăтартусен перечĕнне (3-мĕш хушăм);
вырăнти бюджетсен усăсăр тăкакĕсене шута илме пулăшакан нормативсене тата тĕллевлĕ ĕç кăтартăвĕсене (4-мĕш хушăм).
2. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн:
хула округĕн (муниципалитет районĕн) вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен отчетлă çулталăкра тата çитес виçĕ çулталăкра пурнăçлама палăртнă тĕллевсен эффективлăхне хакламалли кăтартусем çинчен тăвакан докладăн текстĕнче унăн ятне, тытăмне тата содержанине хак паракан виçесене хатĕрлес тата çирĕплетес;
Чăваш Республикин 2009 çулхи тата планпа пăхнă 2010, 2011 çулсенчи республика бюджетне черетлĕ тӳрлетӳсем кĕртнĕ чухне Чăваш Республикинчи хула округĕсемпе муниципалитет районĕсен экономика âмăртăвне йĕркелеме уйăрнă укça-тенке, хула округĕсемпе муниципалитет районĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене чи лайăх кăтартусем тума пулăшас тата çитĕнӳсемшĕн хавхалантарас тĕллевпе грантсем пама ярас тата çак йĕркене Чăваш Республикин черетлĕ финанс çулталăкне тата палăртнă тапхăра хатĕрлекен бюджет проектне çуллен кĕртсе хăварма хушас.
3. Çак Указ ăна официаллă майпа пичетленĕ кунран вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.**

Шупашкар, 2009, кăрлач, 26, 4 №.

Социаллă хӳтлĕх

## Çăмăллăхсем – укçан

Январь уйăхĕнчен тытăнса тĕрлĕ çăмăллăхсене укçан парасси çинчен пĕлтĕрех каланăччĕ. Çапла Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 2008 çулхи декабрĕн11-мĕшĕнчи 379 № Постановленийĕпе килĕшӳллĕн кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса федераллă саккунсенче палăртнă уйрăм категорисене кĕрекен граждансене пурăнмалли çурт-йĕршĕн тата коммуналлă услугăсемшĕн паракан çăмăллăхсене укçан тивĕçтерессĕ. Ку уйăхсерен парса тăракан укça пулать.
Паянхи кун тĕлне «Ветерансем çинчен» Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн вăл пулăшу вăрçă инвалидĕсемпе Аслă Отечествăлла вăрçăра инвалид пулса юлнисен уйăхсерен 605 тенкĕпе танлашать. Аслă Отечествăлла вăрçă участникĕсем валли ăна 360-шар, хĕрӳ çапăçусенче пулнă ветерансем валли 175-шер тенкĕ пăхса хунă. Асăннă категорие кĕрекен çынсем вилнĕ пулсан тӳлев вĕсен çемйисен членĕсем çине сарăлать. «Блокадăлла Ленинградра пурăнакан» паллă илнĕ инвалид пулса юлнă çынсем те 360 тенкĕ илсе тăрĕç.
«Раççей Федерацийĕнчи инвалидсен социаллă хӳтлĕхĕ çинчен» Федераллă саккунпа инвалидсем - 300, инвалид ача пур çемьесем 905 тенкĕ илеççĕ.
Чернобыльти АЭС аварине сирес ĕçе хутшăннă, саккунпа асăннă услугăсене тивĕç граждансене 360 тенкĕ тӳлесе тăраççĕ.
Кăçалтанпа тыл ĕçченĕсем çăмăллăхсем вырăнне уйăхсерен 700 тенкĕ, ĕç ветеранĕсем 710 тенкĕ илмелле. Реабилитациленĕ граждансен ку сумма – 1775 тенкĕ, репрессисем вăхăтĕнче асап курнисен 1530 тенкĕпе танлашать.
Çапла майпа халăхра çӳрекен «çăмăллăхсене пĕтернĕ» текен сасхура тĕрĕс мар. Çăмăллăхсене укçан тивĕçтерессĕ.

**Н.П. ПЕТРОВА,**
**ЧР Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин Муркаш районĕнчи социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи.**

Суйлав ыйтăвĕсемпе

## Суйлав умĕнхи агитаци материалĕсем

Ильинка ял тăрăхĕн пуçлăхĕн январĕн 22-мĕшĕнчи 1-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе Чăваш Республикинчи Муркаш районĕнчи Ильинка ял тăрăхĕнчи пĕр мандатлă 4-мĕш номерлĕ суйлав округĕпе Ильинка ял тăрăхĕн депутачĕсен Пухăвĕн депутатне суйлассипе хушма суйлав иртерессипе агитаци пичет материалĕсене вырнаçтармалли вырăнсене пăхса хунă. Ку вăл Тренккă ялĕнчи Новая урамри 7-мĕш çурт (магазин умĕнчи пĕлтерӳсен хăми).

## Суйлавçăсемпе тĕл пулма

Ильинка ял тăрăхĕн пуçлăхĕн январĕн 22-мĕшĕнчи 2-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе Чăваш Республикинчи Муркаш районĕнчи Ильинка ял тăрăхĕнчи пĕр мандатлă 4-мĕш номерлĕ суйлав округĕпе Ильинка ял тăрăхĕн депутачĕсен Пухăвĕн депутачĕсен кандидачĕсене, вĕсен шаннă çыннисене, суйлав пĕрлешĕвĕсене суйлавçăсемпе тĕл пулма Тренккăри Культура çуртĕн курав залне уйăрнă. Вăхăтне территори суйлав комиссийĕ палăртать.

**Хамăр инф.**

Прокуратура материалĕсем тăрăх

## Должноçри çынна взятка сĕннĕшĕн

Ку ĕç кăçалхи январь уйăхĕн пуçламăшĕнче пулса иртнĕ. Мăн Сĕнтĕрти «Шусăм» кафе патĕнче районти шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн ĕçченĕсем кăнтăрла Николай Данилович Спирковăн ВАЗ-21213 «Нива» автомашинине чарнă. Хысалти ларкăч çинче ларакансем валли хăрушсăрлăх ременĕсем çукки паллă пулнă. Çавна май патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн ĕçченĕ Г.Г. Терентьев Н.Д. Спирков тĕлĕшпе администрацивлă майпа правăна пăсни пирки протокол çырма пикеннĕ. Н.Д. Спиркова вара ку килĕшмен. Вăл должноçри çынна протокол ан çыртăр тесе 100 тенкĕ взятка сĕннĕ.
Çавна каласа хăварасшăн. Взятка илни çеç мар, взятка пани е илме сĕнни те уголовнăй преступлени шутланать. Çавăнпа та асăннă преступлени тĕлĕшпе уголовнăй ĕç пуçарма материалсене прокуратурăна ярса панă.

**С. КОШКИН,**
**РФ Прокуратури çумĕнчи Чăваш Республики тăрăх Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн аслă следователĕ.**

Пĕрлехи патшалăх экзаменĕсем

## Каллех çĕнĕлĕхсем

***Шкулсенчен вĕренсе тухакансен хĕрӳ тапхăр пырать. Патшалăх экзаменĕсемччен вăхăт сахал юлчĕ. Ку çул çак тĕрĕслев йĕркинче татах çĕнĕлĕхсем пур. Çавăнпа та вĕсемпе паллаштарма район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçине З.Ю. ДИПЛОМАТОВАНА ыйтрăмăр:***

– Раççей Федерацийĕн Вĕрентӳпе наука министерствин 2008 çулхи ноябрĕн 28-мĕшĕнче тухнă 362№ хушăвĕпе килĕшӳллĕн пĕтĕмĕшле пĕлĕвĕн тĕп программисене алла илнисен патшалăх аттестацийĕ витĕр тухмалли положение çирĕплетнĕ. Положенире кăтартнă тăрăх, 2009 çулта шкул вĕренсе пĕтерекенсем обязательнăй йĕркепе математикăпа тата вырăс чĕлхипе патшалăх экзаменĕсем тытаççĕ. Ытти палăртнă предметсемпе те пĕрлехи патшалăх экзаменĕсене тытма юрать. Вĕсем: литература, физика, хими, биологи, географи, истори, обществознани, ют чĕлхесем, информатика тата информаци-коммуникаци технологийĕсем. Экзаменсене суйласа пурин те мартăн 1-мĕшĕччен хăйсен шкулĕсенче заявленисем çырмалла.
Кăçалхи çĕнĕлĕх вăл РФ Вĕрентӳпе наука министерстви патшалăх аккредитациллĕ аслă вĕрентӳ заведенийĕсене вĕренме кĕмелли экзаменсене пĕрлĕхлĕ майпа палăртни. Маларах аслă шкулсем вĕренме кĕрекенсен мĕнле экзаменсем тытмаллине хăйсем палăртнă пулсан, кăçал вăл пăрахăçланчĕ. Экзаменсен списокĕпе ЧР Вĕрентӳпе çамрăксен политикин министерствин сайтĕнче паллашма пулать.
Экзаменсем тытасси суйласа илнĕ специализацирен килет. Тĕслĕхрен, врач пулас текенсен патшалăх аккредитациллĕ пур аслă шкулсене вĕренме кĕме те, хăть пирĕн республикăра, хăть Мускаврa, вырăс чĕлхипе математикăсăр пуçне хими тата физика предмечĕсемпе патшалăх экзаменĕсем тытмалла.

(Вĕçĕ 6-мĕш стр.).

Юбилей



## Саламлатпăр

Иштерек ялĕнче пурăнакан **Мария Васильевна ЕРШОВАНА** 80 çулхи юбилей ячĕпе юратса тата хисеплесе, мĕн пур ырă кăмăлтан, чи âшă сăмахсем каласа саламлатпăр. Эсĕ ялан ĕçченĕххĕне, ырă кăмăлупа палăрса тăратăн. Пире те ăс парса пурнăç çулĕ çине тăратрăн, мăнуксене, прамăнуксене те çитĕнтерме пулăшнăшăн питĕ пысăк тав. Тата нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх, телей, çемьере килĕшӳ сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, прамăнукĕсем, тăванĕсемпе пускилĕсем.**

Муркаш салинче пурăнакан **Виталий Афанасьевич НИКОЛАЕВА** 70 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн тухакан мĕн пур ырă сăмахсемпе саламлатпăр. Виталий Афанасьевич нумай çул хушши тракторист-комбайнер пулса ĕçлерĕ. Кун-çулу вăрăм та телейлĕ, сывлăху çирĕп пултăр. Инкек-синкек сан çывăхна ан пытăр. Эпир вара саншăн, хамăрăн чи çывăх çыншăн, яланах савăнатпăр, сана юрататпăр, çĕр çинчи мĕн пур ырлăха сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, икĕ ывăлĕпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, 5 мăнукĕ, хăтисемпе хăтачисем, çывăх тăван-хурăнташĕсем.**